# Чăваш ен

*Сăпайлăн, хăвăртах мар* *Кĕввипе сăвви Р. Волкован.*



Çутă-çутă кӳлĕсем,
Сарă тулă пуссисем.
Хумлă-хумлă вăрмансем.
Анлă ешĕл улăхсем.
Çакăнта ман тăвансем,
Çакăнта ман чăвашсем.
Юрататăп вĕсене,
Манаймастăп ĕмĕрне.

Пирĕн чăваш хĕрĕсем –
Кăвак куçлă чечексем.
Сут хĕвел пек сăнĕсем.
Çепĕç шăпчăк – сассисем.
Чăн та чăваш хĕрĕсем –
Ытарма çук пикисем.
Юрататăп вĕсене,
Ăмсанатăп ĕмĕрне.

Чăваш Енĕн çыннисем –
Пит сăпайлă ĕçченсем.
Ăмăрт кайăк – каччисем,
Ырă чунлă маттурсем.
Çавăн пек çав чăвашсем –
Пултаруллă ентешсем.
Юрататăп вĕсене.
Мухтанатăп ĕмĕрне.

Ятлă-сумлă ватăсем,
Çĕршыва сыхланисем –
Атте- анне йăхĕсем,
Чăваш йăли-йĕркисем,
Вĕсенчен хăватăмсем.
Вĕсенчен тăванлăхсем –
Юрататăп вĕсене.
Пуç таятăп ĕмĕрне.